28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРЬ 28 ЭРНЕКУН 188(6939) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗ, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Государствӑна тырӑ парас ӗçре татӑклӑ улшӑну кирлӗ

Пирӗн хаçатӑн паянхи номерӗнче пичетленсе тухакан сводка республикӑра государствӑна тырӑ парас ӗç çаплах çитменлӗхсӗр пынине кӑтартса парать. Иртнӗ пилӗккунлӑхра, сентябрӗн 23-мӗшӗнче, государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе воскресник те пулса иртрӗ. Анчах нумай районсен руководителӗсем çав воскреснике ирттерме кирлӗ пек хатӗрленмерӗç, ӑна япӑх организацилерӗç. Парти Обкомӗн бюровӗ, государствӑна тырӑ парас ӗçре пирӗн республика кая юлса пыни çинчен асӑрхаттарса, тырӑ парас ӗçе хӑвӑртлатас шутпа воскресник кунӗнче колхозсенчи мӗнпур вӑйпа, кунсӑр пуçне предприятисемпе учрежденисен транспорчӗпе, районсемпе хуласенчи мӗнпур автомашинӑсемпе усӑ курма хушнӑччӗ. Райисполкомсемпе парти райкомӗсенчен чылайӑшӗсем Обкомӑн çав кӑтартуне пурнӑçа кӗртмерӗç.

Ытларах та, хӑшпӗр райком секретарӗсем хӑйсем панӑ сӑмаха тӳрре кӑлармарӗç. ВКП(б) Çӗрпӳ райкомӗн секретарӗ Митьков юлташ пирӗн редакцине воскресник кунӗнче районӗпе пурӗ 256 тонна, Шупашкар райкомӗн секретарӗ Караушев юлташ çав ун—400 тонна, Йӗпреç райкомӗн секретарӗ Гиляровский юлташ—250 тонна тырӑ леçесси çинчен пӗлтернӗччӗ. Анчах пӗр кун хушшинче мар, пӗтӗм иртнӗ пилӗккунлӑхра та вӗсенчен Çӗрпӳ районӗ—338 тонна, Шупашкар районӗ—280 тонна, Йӗпреç районӗ—284 тонна çеç панӑ. Çакӑ вӑл сӑмаха çилпе вӗçтерни пулмарӗ-и-ха ӗнтӗ! Кунсӑр пуçне, Шупашкар районӗ государствӑна тырӑ памалли плана октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех тултарма обязательство илнӗ. Анчах иртнӗ пилӗккунлӑхра ку район 7 процент кӑна ӳсӗм тунӑ пулсан, унӑн государствӑна тата 1.400 тоннӑна яхӑн тырӑ памалла пулсан, октябрӗн 1-мӗшӗччен юлнӑ çак 3—4 кун хушшинче вӑл хӑйӗн обязательствине тултарасса ӗненме питӗ хӗн. Ахальтен мар вӑл иртнӗ пилӗккунлӑхра 5-мӗш вырӑнтан 9-мӗш вырӑна анса ларнӑ. Сӑмах вылятни большевике тивӗçлӗ ӗç мар, Караушев юлташ! Сӑмах патӑн пулсан, ӑна пурнӑçа кӗртмелле.

Калас пулать, пирӗн малта пыракан районсем те иртнӗ пилӗккунлӑхра тырӑ парас ӗçӗн хӑвӑртлӑхне чакарнӑ. Советски район, сӑмахран, сентябрӗн 20-мӗшӗпе 25-мӗшӗ хушшинче унччченхи пилӗккунлӑхринчен 106 тонна сахалтарах панӑ. Çак районсен хӑйсен малти вырӑнӗсене тытса тӑрас тесен, тырӑ парас ӗçӗн хӑвӑртлӑхне чакармалла мар, ӳстермелле. Уйрӑмах тикӗс мар ӗçлет Октябрьски район. Иртнӗ пилӗккунлӑхра вӑл унччченхинчен 179 тонна тырӑ сахалтарах панӑ.

Кая юлакан районсене илсен вара, вӗсем ӗç хӑвӑртлӑхне тата ытларах чакараççӗ. Сӑмахран, унччен те ниепле графика кӗреймен Тӑвай районӗ сентябрӗн 20-мӗшӗпе 25-мӗшӗ хушшинче унччченхи пилӗккунлӑхринчен 228 тонна сахалтарах, Комсомольски район—132 тонна сахалтарах тырӑ панӑ. Елчӗк, Улатӑр районӗсем графика кӗрессинчен аякра тӑраççӗ. Çак районсем пилӗк кун хушшинче пурӗ те 4—5 процент кӑна ӳсӗм тунӑ. Малашне те çакӑн пек хӑвӑртлӑхпах ӗçлесе пырсан, вӗсем государствӑна тырӑ памалли хӑйсен обязательствисене тепӗр 2—3 уйӑхран тин тултарма пултараççӗ. Çакӑ вӑл ӗнтӗ асӑннӑ районсен руководителӗсем—райсовет исполкомӗсен председателӗсемпе парти райкомӗсен секретарӗсем Тӑван çӗршыв умӗнче илнӗ обязательствӑсем çинчен манса кайнине кӑтартса парать.

Нумаях пулмасть Муркаш районӗн руководителӗсене государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе япӑх ӗçленӗшӗн хытӑ критиклерӗччӗ. Иртнӗ пилӗккунлӑхри ӗçӗн результачӗсем çав критика сая кайманнине кӑтартса параççӗ. Ку район самаях ӳсӗм турӗ. Вӑл унччченхи пилӗккунлӑхра паниичен 246 тонна ытларах тырӑ пачӗ. Район 14-мӗш вырӑнтан 5-мӗш вырӑна куçрӗ. Çавӑн пекех иртнӗ пилӗккунлӑхра Чурачӑк районӗ, 15,1 процент ӳсӗм туса, 13-мӗш вырӑнтан 6-мӗш вырӑна, Вӑрмар районӗ—15,1 процент ӳсӗм туса, 18-мӗш вырӑнтан 11-мӗш вырӑна куçрӗç. Анчах вӗсен, хӑйсен обязательствисене вӑхӑтра тултарас тесен, тата нумай хут хӑвӑртрах та лайӑхрах ӗçлес пулать.

Кая юлнӑ районсемпе колхозсен руководителӗсем çаплах йӗпе-сапа çинчен калаççа лараççӗ.

Япӑх ӗçӗн пӗр сӑлтав кӑна, вӑл—япӑх ӗç. Авӑн çапассипе государствӑна тырӑ парас ӗçсене пур районсем те чӑн-чӑн большевикла организацилесен çеç республика çӗршыв умӗнчи обязательствӑсене пурнӑçлас тӗлӗшпе кая юлса пынине пӗтерме пултарать. Республикӑра государствӑна тырӑ парса татнӑ колхозсем халӗ ӗнтӗ вуншарӑн та çӗршерӗн шутланаççӗ. Çав колхозсен руководителӗсем нимӗнле йӗпе-сапана та пӑхса тӑман. Çумӑр çунӑ пулсан, вӗсем авӑна витнӗ итем çинче çапнӑ, кӗлте чӗрӗ пулсан, талӑкӗ-талӑкӗпе авӑн хутса типӗтнӗ; çапнӑ тырӑ чӗрӗрех пулсан, вӗсем ӑна çаплипех хатӗрлев пунктне тиесе кайман; вӗсем государствӑна памалли тӗштырра сушилкӑсенче типӗтнӗ, çавӑнпа вӗсен тыррисене хатӗрлев пунктӗсенчен каялла таварса яман, çапла вара вӗсем тырӑ турттаракан лашасемпе çынсене ытлашши ӗç тутарман, вӑхӑта та сая яман.

Хӑшпӗр çӗрте колхоз председателӗсем çавӑн çинчен манаççӗ. Акӑ иртнӗ воскресникре Çӗрпӳ районӗнчи «Коминтерн» колхозӑн 17 лав тыррине, «Цивильстрой» колхозӑн 11 лав тыррине чӗрӗ пирки хатӗрлев пунктӗ каялла янӑ. Çапла вара лашасемпе çынсене пӗр усӑсӑр ӗç тутарнӑ. Первомайски районри Каганович ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Романов юлташ) юлашки вунӑ кун хушшинче пӗр килограмм та тырӑ паман. Кунта: тырӑ чӗрӗ, заготзерно йышӑнас çук,—тесе лараççӗ. Анчах чӗрӗ тырра типӗтме сушилка туман.

Партипе правительство кӑçалхи çул тырпул пухса кӗртессипе государствӑна тырӑ парас ӗç çинчен йышӑннӑ постановленире колхозсене пур тӗлӗшпе те—витнӗ итемсемпе авӑнсем, сушилкӑсем тӑвас тӗлӗшпе, кирек мӗнле çанталӑкра та авӑн çапса государствӑна тырӑ памалла тӑвас, транспорт бригадисен ӗçне лайӑх организацилес тӗлӗшпе питӗ татӑклӑ кӑтартусем панӑ. Ку постановлени—пуриншӗн те закон пулса тӑрать. Анчах кая юлакан районсемпе колхозсен руководителӗсем мӗншӗн пӑсаççӗ çав закона? Мӗншӗн вӗсем пӗтӗм ӗçе партипе правительство кӑтартнӑ пек организацилемеççӗ? Ответ кунта пӗрре кӑна пулма пултарать: çав йышши руководительсем государство умӗнчи, пӗтӗм Тӑван çӗршыв умӗнчи ответлӑха туймаççӗ.

Государствӑна тырӑ парас ӗçре кая юлса пынине текех тӳсме çук. Тӑван çӗршыв интересӗсем çак ӗçе чӑн-чӑн большевикла организацилеме хушаççӗ. Пирӗн республика вӑрçӑ çулӗсенче хӑйӗн обязательствисене пурне те чыслӑн пурнӑçа кӗртсе пычӗ пулсан, халӗ, мирлӗ вӑхӑтра, кая юлса пыма, республикӑн чысне çухатма нимӗнле сӑлтав та çук. Çакӑн çинчен пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсене тӗплӗн ӑнлантарса памалла, мӗнпур вӑя хамӑр çӗршыв умӗнче панӑ сӑмаха пурнӑçа кӗртме мобилизацилемелле, государствӑна тырпул срокчен парса татмалла, çапла вара хамӑрӑн государствӑн çарпа экономика вӑйхӑватне татах та ытларах тӗреклетмелле.

Хатӗрлев пункчӗсене тутӑ та типӗ тырӑ леçсе парар!

РЕСПУБЛИКӐРА ГОСУДАРСТВӐНА ТЫРӐ ПАРАС ӖÇ СЕНТЯБРӖН 25-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА
(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырӑ панӑ
1. Вӑрнар	84,3
2. Советски	73,2
3. Сӗнтӗр	72,6
4. Сӗнтӗрвӑрри	68,1
5. Муркаш	67,5
6. Чурачӑк	65,4
7. Етӗрне	64,7
8. Красноармейски	62,7
9. Шупашкар	62,3
10. Çӗрпӳ	61,1
11. Вӑрмар	61,0
12. Пӑрачкав	60,5
13. Шӑхасан	60,4
14. Октябрьски	58,8
15. Первомайски	58,1
16. Калинино	57,0
17. Ишлей	56,6
18. Куславкка	54,8
19. Элӗк	54,0
20. Йӗпреç	52,2
21. Чкаловски	51,6
22. Елчӗк	50,4
23. Канаш	49,7
24. Комсомольски	48,7
25. Улатӑр	48,6
26. Шӑмӑршӑ	47,0
27. Çӗмӗрле	43,4
28. Тӑвай	42,4
29. Хӗрлӗ Чутай	41,0
30. Кувакино	30,6

РЕСПУБЛИКӐРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ ПРОДУКЧӖСЕНЕ ХАТӖРЛЕС ӖÇ СЕНТЯБРӖН 20-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА
(Çулталӑкри плана тултарнӑ, процентпа)

РОЙОНСЕМ	Ашкакай	Сӗт	Çӑмарта	Çӑм
Красноармейски	102,3	88,2	88,7	117,6
Çӗрпӳ	81,1	87,6	80,5	112,3
Октябрьски	73,5	55,2	44,6	101,0
Тӑвай	67,3	53,4	34,1	97,9
Сӗнтӗр	66,9	70,3	53,7	84,1
Сӗнтӗрвӑрри	66,3	75,8	43,3	86,7
Элӗк	66,0	66,0	49,7	87,5
Куславкка	63,0	58,2	55,1	88,0
Хӗрлӗ Чутай	62,5	45,0	26,7	65,4
Вӑрмар	61,1	65,9	43,4	90,7
Шупашкар	60,6	89,8	53,6	91,5
Муркаш	59,3	58,8	56,3	122,9
Вӑрнар	59,2	56,1	41,4	101,7
Советски	56,6	52,9	37,1	39,4
Ишлей	56,2	72,1	27,6	76,8
Чурачӑк	56,1	64,7	47,3	108,2
Етӗрне	55,5	77,1	35,3	91,2
Елчӗк	53,9	56,6	29,2	79,8
Первомайски	47,6	46,7	15,7	55,4
Шӑхасан	46,9	48,0	25,9	87,4
Канаш	46,4	65,4	29,2	88,0
Улатӑр	44,9	73,4	24,3	71,2
Çӗмӗрле	44,8	48,6	18,1	71,8
Комсомольски	40,8	37,7	30,0	77,0
Чкаловски	39,5	41,6	16,9	59,3
Калинино	36,8	71,5	23,2	55,7
Шӑмӑршӑ	35,3	29,4	10,5	36,5
Йӗпреç	25,7	45,1	23,0	59,7
Пӑрачкав	18,7	44,8	12,4	48,1
Кувакино	15,4	27,0	4,7	32,2

Авӑн çапмалли плана тултарнӑ

ВӐРНАР, сентябрӗн 27-мӗшӗ. (Телефонпа). Пирӗн МТС тракторсемпе тумалли çулталӑкри ӗç планне 150 процент ытла, комбайнсемпе тырӑ вырса пухмалли плана 106 процент тултарчӗ. Пирӗн пурӗ 4.500 тонна çапмалла. Паянхи кун тӗлне 5.100 тонна ытла çапнӑ. Çапла вара авӑн çапмалли плана та чылай ирттерсе тултартӑмӑр. Молотилкӑпа ӗçлекен Никонор Романов кашни кунах 250 центнер çапас вырӑнне 600 центнер çапать. Унӑн машини кунӗн-çӗрӗн пӗр чарӑнмасӑр ӗçлет. Çавӑн пекех С. Антонов, Игнатьев машиновedсем те кулленхи нормӑна икшер хут ирттерсе тултараççӗ.

Халӗ пӗтӗм вӑя авӑн çапассипе кӗрхи çӗртме тӑвасси çине хуратпӑр. Кӗрхи çӗртме тумалли плана паянхи кун тӗлне çуррине ытла тултарнӑ. А. Макаров, Т. Ильина, У. Порфирьева, Игнатьев, Машанова, Кузьмина, Якимов трактористсем çӗртме сухинче хӑйсен кулленхи планне 120—150 процент тултарса ӗçлеççӗ. Трактористсемпе трактористкӑсем çӗртме тумалли плана виçӗ хут ӳстерсе тултарма пулчӗç. Çак обязательствӑна пурнӑçлассишӗн пурте ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлеççӗ.

Ф. НИКОНОВ, МТС директорӗ.

14 колхоз государствӑна тырӑ парса татнӑ

ЧКАЛОВСКОЕ, сентябрӗн 27-мӗшӗ. (Телефонпа). «Красный Октябрь» колхоз (председателӗ Булатов), «Кзыл тан» колхоз (председателӗ Фейзуллин), Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Макаров), «Гвардеец» колхоз (председателӗ Баранов), Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Челяков), Киров ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Калашников), «Путь Ленина» колхоз (председателӗ Горшкова), Нариман ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Минайзетдинов), Сталин ячӗпе тӑракан колхоз, пурӗ 14 колхоз, государствӑна тырӑ парса татнӑ.

КОЛХОЗ ТЫРӐ ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛӐКРИ ПЛАНА ТУЛТАРЧӖ

СӖНТӖРВӐРРИ. Кукашнери ял Советне кӗрекен «Наркомюст» колхоз (председателӗ Васильев) сентябрӗн 21-мӗшӗ тӗлне государствӑна обязательство тӑрӑх 201 центнер тырӑ парса, çулталӑкри плана тултарчӗ. Колхоз сентябрӗн 22-мӗшӗ тӗлне кӗлте турттарса, авӑн çапса пӗтерчӗ. Халӗ кунта государствӑна çӗрулми парасси ӑнӑçлӑн пырать. Паянхи кун тӗлне колхоз государствӑна 3056 килограмм çӗрулми леçсе панӑ.

И. САЛАМБЕК.

Комсомолецсем паха тӗслӗхсем кӑтартаççӗ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрӗн 27-мӗшӗ. (Телефонпа). Районра кашни колхозрах комсомолецсемпе çамрӑксен бригадисене тунӑ. Вӗсем пур çӗрте те лайӑх ӗçлеççӗ. «Трактор» колхозра комсомолецсен бригадине Лиза Павлова комсомолка ертсе пырать. Çак малта пыракан колхозра та çамрӑксен бригади мала тухрӗ. Бригада ыттисенчен малтан, сентябрӗн 12-мӗшӗ тӗлне тӗштырӑсене вырса пӗтерчӗ, сентябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне авӑн çапса государствӑна тырӑ тата çӗрулми парса татрӗ.

Çавӑн пекех «Красный Октябрь» колхозра та çамрӑксен бригади лайӑх ӗçлет. Кунта бригадӑна Мария Григорьева юлташ ертсе пырать. Государствӑна тырӑ леçме ятарласа бригада тунӑ. Бригадӑна 3 лаша тата 3 вӑкӑр панӑ. Çак туртӑм вӑйӗпе вӗсем 518 центнер тырӑ леçсе районра чи малтан государствӑна тырӑ парса татнӑ.

Пушкин ячӗпе тӑракан колхоз (пуçламӗш парторганизаци секретарӗ Тихонова юлташ). «Кзыл сабанча» колхоз (пуçламӗш организаци секретарӗ Вахреев юлташ), «Красный борец» колхоз (пуçламӗш организаци секретарӗ Леонтьев юлташ) тата «Сӗнтерӳ» колхозри комсомолецсем калама çук тӑрӑшса ӗçленине пула государствӑна тырӑ парса татрӗç.

Ытти колхозсенчи комсомолецсемпе çамрӑксем те çӳлерех асӑннӑ комсомол организацийӗсем пек тимлӗн ӗçлесен пысӑк çитӗнӳсем тума пултараççӗ тата тумалла та. Çамрӑксен бригадисем кӗрхи çӗртме тӑвас, кӗлте кӗртес, авӑн çапас тата государствӑна тырӑ парас ӗçре ывӑнма пӗлмесӗр кунӗн-çӗрӗн ӑмӑртса ӗçлемелле.

Н. ГАЛКИН. ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

КЛЕВЕР ВЫРСА ПУХАÇÇӖ

ИШЛЕЙ. Районри колхозсем кӑçал 300 гектар ытла вӑрлӑхлӑх клевер çитӗнтерчӗç. Паянхи куна 250 гектар вырса пухнӑ. «Правда» колхоз 13,5 гектар, «МОПР» колхоз 6 гектар, «Комбайн» колхоз 8 гектар клевер вырса типӗтсе сурата хывнӑ.

Анчах та «Коммунист», Буденный, Каманин ячӗсемпе тӑракан колхозсем клевер çулса пухма тытӑнман. Чылай колхозсем клевера вырса пухнипех лӑпланса лараççӗ. Паянхи куна «Новая жизнь» колхозсӑр пуçне, пӗр колхоз та клевера çапса шӗкӗлчеме тытӑнман.

В. ГУСЬКОВ.

Кӗлте кӗртсе пӗтернӗ

Советски районри Элешкушкӗнчи «Труд», Турхлари «Электросвет», Кивуйри «Первое мая» колхозсем уйри тырпула итем çине кӗртсе капана хывса пӗтерчӗç. Вӗсем халӗ октябрӗн 1-мӗшӗччен авӑн çапса пӗтерессишӗн тимлӗн ӗçлеççӗ. Молякри «За коммунизм» тата «Сеятель» колхозсем вӑрлӑхлӑх клевера вырса пӗтернӗ.

Я. СИГАЕВ.

ГОСУДАРСТВӐНА ПАХЧАÇИМӖÇ ПАРСА ТАТНӐ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Çӗнӗ Куснарти «Восток» колхозра пахчаçӑ-бригадир пулса Ефим Михайлов 6 çул ӗçлет. Вӑл хӑйӗн ӗçне юратса тӑвать. Колхоз çулсеренех пахчаçимӗç нумай туса илет. Колхоз кӑçалхи малтанхи пахчаçимӗçе государствӑна парса, 1945 çулхи пур обязательствӑсене те тултарчӗ.

Совет Союзӗпе Венгри пӗр-пӗринпе çӗнӗрен дипломатиллӗ çыхӑнса тӑма пуçлани

Сентябрӗн 25-мӗшӗнче Союзниксен Венгрири Контроль Комиссийӗн председателӗ Совет Союзӗн Маршалӗ К. Е. Ворошилов Совет правительстви хушнипе Венгри премьер-министрне Б. Миклош господина заявлени панӑ. Заявленире çапла каланӑ: Совет правительстви Венгрипе дипломатиллӗ çыхӑну пуçласа яма йышӑннӑ, пӗр-пӗрин патне посланниксем яма сӗнет, тенӗ. Заявленире çакна кӑтартса панӑ: Совет правительстви çакна Венгри союзниксене гитлерла Германие хирӗç ӑнӑçлӑн вӑрçма пулӑшнине кура тата 1945 çулхи январӗн 20-мӗшӗнче перемири çинчен тунӑ килӗшӗве Венгри тӗрӗссӗн пурнӑçа кӗртсе пынине кура йышӑннӑ.

Венгрин вӑхӑтлӑх наци правительстви Совет правительстви çапла йышӑннипе пӗтӗмӗшпех килӗшнӗ. Совет правительствин решенине кӑмӑллани çинчен пӗлтернӗ.

В. М. Молотов юлташ акӑлчансен Совет Союзӗпе культура тӗлӗшӗнчен çыхӑнса тӑрас тӗлӗшпе ӗçлекен обществинче пулнӑ йышӑнура тухса калани

ЛОНДОН, сентябрӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 25-мӗшӗнче акӑлчансен Совет Союзӗпе культура тӗлӗшӗнчен çыхӑнса тӑрас тӗлӗшпе ӗçлекен обществи В. М. Молотов юлташ ячӗпе пысӑк йышӑну туса ирттернӗ. Хӑнасем шутӗнче çаксем пулнӑ. Англин ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ Бевин, çӗрӗç министрӗ Том Уильямс, сывлӑх министрӗ Бивен, информаци министрӗ Эдвард Уильямс, парламентӑн нумай членӗсем, наукӑпа искусство представителӗсем, Совет Союзӗн Англири посолӗ Гусев, Совет Союзӗн Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи посолӗ Громыко, Ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗсен совечӗн конференцине кайнӑ совет делегацийӗн членӗсем.

Общество председателӗ Д. Н. Притт общество ячӗпе Молотов юлташа саламласа сӑмах каланӑ. Вӑл çапла каланӑ: тӗнчери хӑрушсӑрлӑх тата мирлӗ пурнӑç Англипе Совет Союзӗ туслӑ пурӑннинчен чылай килеççӗ. Англире Совет Союзӗн тусӗсем нумай, анчах та Англипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑхӑн тӑшманӗсем те пур. Вӗсем йышлах мар, анчах та вӗсем вӑйлӑ.

Молотов юлташ наукӑпа искусство деятелӗсемпе нумайӑшӗпе паллашса тухнӑ. Унтан вӑл Д. Н. Притт саламне хирӗç сӑмах тухса каланӑ. Сӑмах калас умӗн, ӑна нумайччен алӑ çупса сума сунӑ. Молотов юлташ çапла каланӑ:

«Паян мана Англи наукипе искусствинче ӗçлекен питех те паллӑ деятельсемпе тӗл пулма тӳрӗ килчӗ. Эпӗ чи малтан Сире, Притт господин, тата кунта пухӑннӑ ытти çынсене те мана ӑшшӑн йышӑннӑшӑн тав тӑвасшӑн. Пирӗн пӗрлехи тӑшмана хирӗç—фашистла Германие хирӗç—пынӑ вӑрçӑн йывӑр çулӗсенче Совет Союзӗпе Великобритани хушшинчи туслӑх ӳссе çирӗпленсе пычӗ. 1942 çулхи çуркунне Англипе Совет Союзӗ пӗр-пӗринпе союзлӑ пуласси çинчен тунӑ договор Англипе Совет Союзӗн туслӑхне тата вӗсем пӗр-пӗрне лайӑх ӑнланнине вӑйлатса пымалли çирӗп никӗс пулса тӑмалла. Çав туслӑха яланах тытса пырасси тата ӑна малалла çирӗплетсе пырасси пирӗн икӗ çӗршыва кӑна кирлӗ мар, вӑл мирлӗ пурнӑçа юратакан, тӗнчере çирӗп мирпе хӑрушсӑрлӑх туса хума тӑрӑшакан пур çӗршывсене те кирлӗ. Англипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑ çыхӑнӑва тата вӗсем пӗр-пӗрне лайӑх ӑнланнине çирӗплетсе пыма пулӑшакан чи хаклӑ ӗçсенчен пӗри вӑл—пирӗн икӗ асла халӑх культура тӗлӗшӗнчен çыхӑнса тӑнине лайӑхлатса пыни пулса тӑрать (алӑ çупаççӗ). Çавӑнпа та çак общество пирӗн халӑхсене культура тӗлӗшпе пӗрлештерсе тӑма тӑрӑшнине пур енчен те пулӑшма тивӗçлӗ. Çав ӗçе мӗн тери анлӑн та лайӑх туса пырӗç, çавӑн чухлӗ вӑл пирӗн халӑхсене кирлӗрех те усӑллӑрах пулӗ. Суя хыпарсемпе элек саракансене каярахпа пурпӗрех çӗмӗрсе тӑкса намӑса кӑларӗç. Çапла пултӑр тесен, пирӗн çӗршывсенчи ӗçпе культура çынӗсен чӑнлӑх сарассишӗн тата пирӗн туслӑха çирӗплетессишӗн цӗр чарӑнмасӑр кӗрешес пулать (алӑ çупаççӗ). Халӗ Лондонра пилӗк державӑн Ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗсен совечӗн пӗрремӗш сессийӗ пырать. Вӑл питех те кирлӗ ыйтусене пӑхса тухать. Демократиллӗ çӗршывсенче пуринче те ӑна ӑнӑçлӑ ӗçлеме ыра сунаççӗ. Совет делегацийӗ çав министрсен совечӗн тӗп задачине çакӑн пек шутлать: агрессорсене хӗвеланӑçӗнче те хӗвелтухӑçӗнче те аркатса тӑкса тунӑ çӗнтерӗве çирӗплетес пулать, хамӑрӑн пӗтӗм вӑя тӗнчери халӑхсемшӗн нумай çуллӑха çирӗп мир туса хурас ӗçе памалла.

Опыт пире çакна кӑтартрӗ: çавӑн пек чухне çавӑн пек тӑвӑпӑр тесе каланисем çине шаннипе иртсе кайма юрамасть. Пирӗн телее, демократиллӗ çӗршывсенче халӗ ӗнтӗ çапла шухӑшлакан çынсем нумай. Вӗсем пурте çакна лайӑх ӑнланса илнӗ: агрессиллӗ фашистла çӗршывсене пирӗн паттӑр боецсем аркатса тӑкни тивӗçлӗ условисем пулсан çеç мире пулӑшма пултарать. Çапла пултӑр тесен, пирӗн хамӑр çӗршывсенчи тата ытти çӗршывсенчи демократи вӑйӗсене пур майпа та пулӑшмалла, ют çӗршывсене тапӑнас шухӑша саракан тӗп вӑй пулса тӑракан фашизмран тӑрса юлнӑ усал-тӗселе çӗнӗрен чӗртсе яма памалла мар (алӑ çупаççӗ).

Çаксене пурне те тӑвас тесен, пирӗн икӗ çӗршыв хушшинче политика, культура тата суту-илӳ çыхӑнӑвне вӑйлатса пымалла. Мӗнпур демократиллӗ çӗршывсем хушшинчи туслӑх ӳссе çирӗпленсе пытӑр (алӑ çупаççӗ).

Юлашкинчен эпӗ акӑлчансен Совет Союзӗпе культура тӗлӗшӗнчен çыхӑнса тӑрас тӗлӗшпе ӗçлекен обществине тата тепӗр хут ӑнӑçлӑ ӗçлеме ыра сунатӑп (алӑ çупаççӗ). Эпӗ сире, хаклӑ тусӑмсем, Совет Союзӗ ячӗпе саламлатӑп». (Тӑвӑллӑн алӑ çупаççӗ).

ПӖР ХЫПАРСӐР ÇУХАЛНӐ ÇЫНСЕНЕ ШЫРАСА ТУПАССИ

Мускавра Совет Союзӗн Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Çуруйӑх обществисен Союзӗн Ӗç тӑвакан комитечӗ çумӗнче Справкӑсем паракан тӗп бюро тунӑ. Çав бюро Совет Союзӗнчи граждансене—тӑшман çарӗсем хӑваласа кайнӑ çынсене, вӑрçӑ пирки тыла куçарнӑ çынсене тата вӑрçӑ вӑхӑтӗнче пӗр хыпарсӑр çухалнӑ çынсене шыраса тупма пулӑшать.

Заявленире çухалнӑ çыннӑн хушаматне, ятне тата ашшӗ ятне, миçемӗш çулта тата ӑçта çуралнине, мӗнле халӑх иккенне, профессине, юлашки вӑхӑтра ӑçта пурӑннине, юлашки вӑхӑтра ӑçта ӗçленине тата вӑл ӗçленӗ учрежденин адресне кӑтартмалла, çавӑн пекех тата заявлени паракан çыннӑн хӑйӗн хушаматне, ятне, ашшӗ ятне, хӑй çухалнӑ çыннӑн мӗнле тӑванӗ пулнине тата хӑйӗн адресне кӑтартса памалла.

Справкӑсем паракан тӗп бюрора ответлӑ работниксем талӑкӗпех дежурнӑй пулса ӗçлеççӗ. (ТАСС).

МУСКАВРИ ПИЧЕТ РАБОТНИКӖСЕН ПУХӐВӖ

Сентябрӗн 25-мӗшӗнче Союзсен Çуртӗн колоннӑллӑ залӗнче пичет работникӗсен пухӑвӗ пулса иртнӗ. Пухӑва «Правда» хаçатӑн вунӑ пинмӗш номерӗ тухнӑ ятпа Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Мускав комитечӗ пухнӑ. «Правда»—Ленинпа Сталин партийӗн боевой органӗ» ятлӑ темӑпа «Правда» хаçатӑн редакторӗ П. Н. Поспелов юлташ доклад тунӑ.

Пуху хавасланса Сталин юлташа салам янӑ.

Пухӑва пухӑннисем çавӑн пекех тата «Правда» хаçатӑн редакцине те салам янӑ.

Юлашкинчен пысӑк концерт пулнӑ, унта столицӑри чи лайӑх артистсем хутшӑннӑ.

К. Э. Циолковские асӑнса тунӑ каç

Наукӑпа техника пропагандин совечӗ тата СССР Наука академийӗн техника историйӗ тӗлӗшпе ӗçлекен комиссийӗ çав тери чаплӑ вырӑс ученӑйӗ К. Э. Циолковский вилнӗренпе 10 çул тултарнӑ май сентябрӗн 25-мӗшӗнче Ученӑйсен çуртӗнче каç туса ирттернӗ.

В. Н. Юрьев академик хӑйӗн малтанхи сӑмахӗнче хӑюллӑ тӗпчевçӗн, пулас техникӑна чи малтан курма пултарнӑ скерӗн чаплӑ сӑнарӗ çинчен каласа панӑ.

В. Н. Воробьев профессор «К. Э. Циолковский—ученӑй» ятлӑ доклад туса панӑ. Вӑл Циолковскин пурнӑçӗпе ӗçӗн тӗп тапхӑрӗсем çинчен, Циолковский иртнӗ ӗмӗр вӗçӗнче наука общественноçӗ умӗнче пуçласа туха-туха калани çинчен каласа панӑ. Çавна пула Циолковские çав вӑхӑтрах питӗ нумай çын пӗлнӗ. Докладчик ученӑйӑн аэродинамика тӗлӗшпе, реакциллӗ двигательсем тӗлӗшпе тата вӗçекен аппаратсен моделӗсем тӗлӗшпе тунӑ ӗçӗсем çинчен уйрӑмах нумай каланӑ.

— Циолковскин наукӑри тӗпчевӗсем пирӗн çӗршывӑн оборонине çирӗплетес ӗçре пысӑк вырӑн йышӑнчӗç,—тенӗ докладчик.

Лару залӗнче выставка уçӑлнӑ. Унта Циолковскин сайра тӗл пулакан кӗнекисене тата ученӑйӑн пурнӑçӗпе ӗçӗсене кӑтартакан фотоӳкерчӗксене вырнаçтарса хунӑ. (ТАСС).

ВЦСПС-ра

ПУРӐНМАЛЛИ ÇУРТЙӖРСЕНЕ ТАТА КОММУНАЛЬНӐЙ, ЙӐЛА УЧРЕЖДЕНИЙӖСЕНЕ, ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕНЕ ХӖЛЕ ХАТӖРЛЕССИ ÇИНЧЕН

ВЦСПС секретариачӗ профсоюзсен Центральный Комитечӗсене профсоюзпа хуçалӑх организацийӗсене çуртйӗрсене тата коммунальнӑй, йӑла учрежденийӗсене юсаса пӗтерме пулӑшма тата вут-шан[illegible]рсе килме пулӑшма предприятисемпе работниксем яма хушнӑ. Çав асӑннӑ ӗçсене тунӑ çӗре предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисене хутшӑнтармалла.

Ленинграда, Ростова, Харькова, Воронежа, Сталинграда, Днепропетровска, Горькие, Молотова, Свердловска, Новосибирска ВЦСПС-ӑн бригадисем тухса каяççӗ. Çав бригадӑсен профсоюз организацийӗсене пурӑнмалли çуртйӗрсене хӗле хатӗрлеме пулӑшмалла.

Совет профсоюзӗсен делегацийӗ пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцине тухса кайнӑ

Çак кунсенче Париж хулине пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцине Совет профсоюзӗсен делегацийӗ тухса кайнӑ.

Делегацире çак юлташсем тӑраççӗ: В. В. Кузнецов (делегаци пуçлӑхӗ), М. П. Тарасов, Л. Н. Соловьев, Л. В. Марков, В. С. Цветков, Е. Г. Шульга, М. И. Кузнецов, А. И. Рогова, Н. И. Баскаков, В. Я. Карягин, Н. С. Сергеева, Л. А. Иллисон, М. М. Фалин, П. Н. Якимец, И. Н. Жмыхов, О. И. Басова. (ТАСС).

ВИÇӖ ДЕРЖАВӐН БЕРЛИНРИ КОНФЕРЕНЦИЙӖН МАТЕРИАЛӖСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КӐЛАРНИ

Политика литератури государство издательстви виçӗ державӑн 1945 çулхи июлӗн 17-мӗшӗпе августӑн 2-мӗшӗ хушшинче Берлинра пулса иртнӗ конференцийӗн материалӗсене уйрӑм кӗнеке туса кӑларнӑ.

Кӗнекене çак материалсене кӗртнӗ: конференци уçӑлни çинчен пӗлтерни, Берлинри конференци ӗçӗсем çинчен пӗлтерни, 1945 çулхи августӑн 3-мӗшӗнче тухнӑ «Правдӑпа» «Известия» хаçатсен умстатьисем.

Кӗнекене 50.000 экземпляр кӑларнӑ (ТАСС).

Луи Пастер

(Вилни 50 çул тултарнă май)

Аллă çул каярах—1895 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче—французсен генияллĕ ученăйĕ, микробиологи никĕсне хывакан Луи Пастер вилнĕ. Унăн наука тĕлĕшĕпе тунă ĕçĕсем ăна хăй пурăннă чухнех чапа кăларнă. Анчах çапах та унпа пĕр вăхăтра пурăннă çынсем Пастерăн ĕçĕсем наукăра мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине пĕтĕмпех хаклама пултарайман, унăн ĕçĕсем биологине, медицинăна тата промышленноçа аталантарас тĕлĕшпе мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăма пултарнине малтанах каласа пама пултарайман. Малтанхи вăхăтра Пастер яналасен тытăмĕн проблемине тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Вăл эрех кислотине тĕпчесе опытсем туниччен малалла вара стереохими—молекулăра атомсем мĕнле вырнаçса тăнине вĕрентекен наука пуçланса кайнă. Çапла ĕнтĕ вăл хăйĕн наукă ĕçне химик пулса ĕçлессинчен тытăннă.

1854 çулта Пастера Лилль хулинчи профессор туса хунă. Кунта эрех тăвакан предприятисем питĕ нумай пулнă. Çак вăхăтрах вăл йÿçнине тĕпчесе вĕренме тытăннă. Вăл вăхăтри нумай ученăйсем: йÿçни вăл химилле процесс çеç, унта нимĕнле чĕрчунсем те хутшăнмаççĕ, тесе шутланă. Пастер вара йÿçни вăл—микроскоп витĕр çеç куранакан питĕ вĕтĕ чĕрчунсем—çĕпре е бактерисем хутшăннипе çеç пулма пултарнине кăтартса панă. Çавăн пекех тата вăл йÿçни темиçе тĕрлĕ—спиртла, сĕтле, çуллă пулнине, йÿçĕтекен хăшпĕр микроорганизмсене пурăнма сывлăшри кислород пачах та кирлĕ маррине кăтартса панă. Çак факт çав тери çĕнĕ пулнине кура, ăна хăшпĕр паллă ученăйсем те часах йышăнса ĕненмен. Йÿçнин биологиллĕ теорине туса Пастер çĕр çийĕнче органически яналасем тăтăшах арканса çĕрсе пынă процесра микробсем хутшăнса ĕçленине, урăхла каласан, геологири улшăнусенче микроорганизмсем те паллă вырăн йышăнса тăнине пуçласа кăтартса панă.


Хăй тĕллĕн пурнăç пуçланса кайни çинчен калакан теорине хирĕçлес тесе тунă тĕпчевĕсем унăн уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Ансат та ĕнентермелле опытсемпе усă курса Пастер çак проблемăна ăнăçлăн татса панă. Вăл пур тĕрлĕ микробсем те микробсенчен пулнине, тĕрлĕ шĕвексенче пурнăç хăй тĕллĕн пуçланса кайманнине тĕпчесе пĕлнĕ. Пĕр-пĕр саватри шĕвеке вĕретсе ун ăшĕнчи мĕнпур чĕрчунсене пĕтернĕ хыççăн та çав шĕвекре микроорганизмсем пулаççĕ пулсан, унта вара вĕсем сывлăшран лекнĕ, мĕншĕн тесен сывлăшра тусанпа пĕрлех микробсен клеткисем те пур. Çаксем, паллах, хальхи вăхăтра, эпир опытсем тунă условисенче, яналаран чĕрчун пулманнине кăтартса параççĕ. Анчах та вĕсем темиçе миллион çул каярах çĕр çинче пурнăç сикчевлĕн пуçланса кайнине хирĕçлемеççĕ.

Пастер йÿçнине тĕпчесе вĕреннĕ вăхăтрах Европăра пурçăн хурчĕн чирĕ пуçланса пурçăн промышленноçĕ умне питĕ пысăк хăрушлăх кăларса тăратнă. Пастерăн вара хăйĕн тĕпчев ĕçĕсене вăхăтлăха чарма тивнĕ. Ученăй тăрăшса ĕçлени усăсăр пулман—вăл сывмар пурçăн хурчĕн ÿчĕ çинче чире яракан микроба тупнă, вăл мĕнле сарăлса пынине тата ăна мĕнле пĕтермеллине кăтартса панă. Çакă ĕнтĕ Францин кăнтăрти пайне чухăнланса юласран çăлса хăварнă.

Малашне Пастер выльăх-чĕрлĕхпе этемĕн чир-чĕрне тĕпчесе вĕренме тытăннă. Вăл вăхăтри врачсенчен нумайăшĕсем микробсем чир ертме пултарнине ĕненмен. Ку тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлеме тытăнса Пастер çĕпăр чирĕ, фурункулез, остеомиэлит, ача çуратнă хыççăнхи вĕри чир, сыснасен хĕрлĕхĕнĕ, чăх халерĕ йышши тата ытти чирсене те пуçласа яраканĕсем микробсем пулнине кăтартса панă. Выльăх-чĕрлĕх организмне вăйсăрлатнă, сиенлĕхне чылай чакарнă микробсене кĕртни выльăх-чĕрлĕх организмне çак чире парăнми тунине тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн, Пастер ерекен тĕрлĕ чирсепе касмалли (сыпмалли), прививка тумалли меле шухăшласа кăларнă. Ку меле халĕ питĕ анлăн усă кураççĕ.

Унтан ученăй урнă чире прививка тумалли меле шутласа тупнă. Çак тĕпчевсенче Пастерăн генилĕхĕ уйрăмах вăйлăн палăрнă, мĕншĕн тесен халĕ ĕнтĕ урнă выльăх сыртнă çынна çăлса хăвармалли меле шыраса тупнă. Анчах та урнă чирĕн микробне хăйне ку тарапа çитсе те шыраса тупайман-ха. Урнă чир тĕлĕшпе тунă тĕпчевсем вĕсем çав тери тĕлĕнмелле те хăюллă тĕпчевсем пулса тăраççĕ. Ку ĕç Пастерăн юлашки ĕçĕ пулса тăрать. Ăна вăл ватăлса çитсен тин туса пĕтернĕ.

Пастер тунă ĕçсене кĕскен çакăн пек хисеплесе тухма пулать ĕнтĕ. Анчах та



ученăй Пастерăн уйрăмлăхĕ вырăнне вăл çав тери талантлă экспериментатор пулнине кĕртме юрать. Вăл хăй химик пулнă май, биологие аналитикăллă тĕрĕс мелсем кĕртнĕ. Пĕр-пĕр ыйтăва çирĕплетес тесе авторитетлă çынсен шухăшĕсене илсе кăтартас вырăнне, вăл вăхăтра наука тĕлĕшпе пулакан диспутсенче час-часах усă курнă мелпе—илемлĕ калаçнипе ĕнентерес вырăнне, вăл опыт результачĕсене кăна илсе кăтартма сĕннĕ. Тĕпчевсем тунă май Пастер хирĕçлеме пултаракан пур ыйтусене те хăех кăларса тăратнă та вĕсене вара опытсем туса çийĕнчех сирсе пăрахнă. Шăпах çакăн пирки те ĕнтĕ унăн ĕçĕсем халĕ те хăйсен вăйне, хăйсен пĕлтерĕшне çухатмаççĕ: вĕсене вĕçне çитиччен çав тери тĕрĕс туса çитернĕ.

«Пастер вăл нихăçан та йăнăшман», тесе калаççĕ. Питĕ сахал ученăй çинчен çавăн пек каланине илтме пулать. Çакă ĕнтĕ унăн мĕнпур вывочĕсем яланах гранит пек çирĕп никĕс çинче тăнинчен кăна пулма пултарнă. Вăл опытсене питĕ тĕплĕн тунă. Вĕсен результачĕсем никама та иккелентермен. Çавăн пирки те ĕнтĕ Пастер хăйне хирĕçлекеннисене яланах çĕнтернĕ. Ăна хирĕçлекеннисем нумай пулнă, вĕсенчен чылайĕшĕ хăйсен тĕрĕслĕхне сăмахпа е тирпейсĕр тунă опытсемпе кăтартса пама тăрăшнă.

Çав генийллĕ пултарулăха пурнăça кĕртсе пымашкăн мĕнпур пурнăç тăршшĕпех çав тери тăрăшса ĕçлеме кирли çинчен уйрăмăн калама та кирлĕ мар. Пастерăн куçсулĕ çакна татах та тепĕр хут çирĕплетсе парать. Унăн ирĕкĕ тимĕр пек çирĕп пулни тата вăл хăйĕн пурнăçĕн тĕллевне çав тери лайăх курса тăни питех те тĕлĕнтерет. Вăл хăйĕн ĕмĕрĕн иккĕмĕш çур пайĕнче те, паралич çапнă пирки сÿреймен вăхăтра та çав тери тăрăшса ĕçленĕ. Ахальрен мар ĕнтĕ вăл: «Урăх ниепле те май килмен çĕрте çеç этемĕн тивĕçĕ пĕтет», тесе каланă.

Паллах ĕнтĕ, тăрăшса ĕçлени тата экспериментсене çав тери ăста тума пĕлни Пастера ĕмĕрлĕхе чапа кăларнă. Пастер вăл вăхăтри наукăра пачах та çĕнĕ тата йĕркеллĕ гипотезăсемпе теорисем тунипе палăрса тăрать. Пастер наука тĕлĕшĕнчен фантазиллĕ шухăшсенчен те парăнман, çав фантазисем вĕсем тĕпчевçĕн чылай пысăк вăйĕ пулса тăрать, тесе каланă вăл. Анчах та хăйĕн шухăшĕсене çав тери хăюллăн каланипе пĕрлех вăл кашни уйрăм ыйту çине çав тери тишкерÿллĕн пăхнă, паллă мар кашни ыйтăва опытсем туса тĕрĕсленĕ.

Пастер пек хăйĕнчен хăй çав тери хытă ыйтакан тĕпчевçĕне урăх кăтартса пама та йывăр. Пĕр-пĕр гипотезăна тĕрĕслесе пăхман пулсан, çав гипотеза тĕрĕслевре тÿрре тухман пулсан, Пастер ун çинчен каласма та юратман. Ученăй творчествинче икĕ пуçламăшĕ пур пек туйăнать. Пĕрремĕшĕ—çĕнĕ шухăшсене татса парас тесе хастаррăн та хăюллăн ĕçе тытăнни, иккĕмĕшĕ—çав шухăшсем çине çав тери тишкерÿллĕн, тепĕр чухне тата чăкăлтăшла та пăхса ушăн вăхăта пăхмасăр ĕçлени.

Пастер ĕçĕсем этемлĕхшĕн мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине халь тин пĕтĕмпех пĕлме май килчĕ. Унăн шухăшĕсене малалла аталантарни техникăпа медицинăри микробиологие, иммунологие, стереохимие тума май пачĕ. 50 çул хушши ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери ученăйсем унăн ĕçĕсенче çав тери паха шухăшсемпе идейăсем тупса пыраççĕ, çав шухăшсемпе идейăсем нумай открытисен çăлкуçĕсем пулса тăчĕç. Пастер ĕçĕсем наукăна аталантарас тĕлĕшпе çеç мар, этемĕн кулленхи пурнăçĕнче те, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче те паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çакна ĕнтĕ ученăйĕн творчествинче теорипе практикăн пĕрлĕхĕ уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăнипе ăнлантарса пама пулать. Вăл—çутçанталăк наукисен классикĕ тата паллă теоретик — теориллĕ «аслă» наукăпа прикладной «кĕçĕн» наука çинчен нихăçан та пĕр сăмах та каламан. Вăл технологи процесĕсене вĕренсе пынă, экономика ыйтăвĕсемпе интересленнĕ, хăйĕн çитĕнĕвĕсене практикăра пурнăça кĕртсе пырассине хăйĕн тивĕçĕ тесе шутланă. «Наукăсем тата наука çумне хушса кĕртнисем пур. Вĕсем пĕр-пĕринпе çимĕçĕпе çав çимĕçе çитĕнтернĕ йывăç пекех çыхăнса тăраççĕ», тесе халĕ час-часах калакан пуплеве чи малтан Пастер каланă.

Пурнăç хăй тĕллĕн пуçланса кайни тĕлĕшпе тунă тĕпчевсем пачах та теориллĕ тĕпчевсем пулнă. Микроорганизмсем хăйсем тĕллĕн пуçланса кайма пултарайманни çинчен вĕрентни вара хирургире тасалăх тума пулăшнă. Çакна пула ĕнтĕ юлашки вунă çул хушшинче темĕн чухлĕ çын пурнăçне çăлса хăварнă. Микроорганизмсем хăйсем тĕллĕн пуçланса кайма пултарайманни синче апат-симĕç промышленноçĕн чылай отраслĕсем—консервăсем тăвасси, сĕте пастеризаци тăвасси, эрех-сăра тăвасси тата ыттисем те никĕсленсе тăраççĕ. Йÿçни çинчен çырнă ĕçсем йÿçнин сăлтавĕсене татса пачĕç, çак тĕпчевсем вара йÿçнĕ чухне пулакан микробиологие туса хучĕç, спирт, сăра, исĕмçырли эрехĕ, уксус, сĕт кислоти тата ытти продуктсене те тăвассине наука тĕлĕшĕнчен ăнлантарса пама май пачĕç.

Чир-чĕр пуçласа яракан микробсене тĕпчесе вĕренни патологире питĕ пысăк çитĕнÿсем тума пулăшрĕ. Çав тĕпчевсемпе усă курса иммунитетпа эпидемиологи наукисене тума май килчĕ. Çав тĕпчевсемех тата тĕрлĕ чир-чĕртен сыхланас тесе прививкăсем тума май пачĕ. Çапла ĕнтĕ этемпе выльăх-чĕрлĕхĕн ерекен чирĕсемпе кĕрешмелли чи шанчăклă мелсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Урнă чирпе кĕрешес ĕçсене пур çĕршывсенче те йышăнса ырланă. Çавна пула ĕнтĕ нумай çĕршывсенче Пастер станцийĕсене йышлăн уçнă. Çав станцисенче урнă выльăх сыртнă çынна тивĕçлĕ прививкăсем туса сыватаççĕ. Россияра чи малтанхи Пастер станцийĕсене иртнĕ ĕмĕрĕн юлашки çулĕсенче Одессăпа Петербург хулисенче уçнă. Хальхи вăхăтра Совет Союзĕнче çавăн пек станцисем нумай ĕçлеççĕ.

50 çул каярах Франци генийллĕ ученăя çеç мар, çав вăхăтрах тата Тăван çĕршывăн çуламлă патриотне те çухатрĕ. «Этемлĕхшĕн тăрăшса ĕçлĕр,—тенĕ Пастер,—анчах та хăвăрăн Тăван çĕршывăр пулса тăракан кĕтесе ан манăр». 1870 çулта Прусси Францие тапăнсан, Пастер хăй сывмаррине пăхмасăрах, çара кайма шут тытнă. Франци парăнни, Парижа тупăсемпе персе аркатни, ишĕлтерни ăна питĕ пăшăрхантарнă, нимĕçсене курайми тунă. Çав курайманлăха вăл хăйĕн чĕринче мĕн виличченех тытса усранă. Вăл Бонн университечĕ хăйне докторăн хисеплĕ ятне панине йышăнман. Иккĕмĕш Вильгельмран нимĕç орденне те йышăнман. Наука тĕлĕшĕпе тунă ĕçсемшĕн ăна Берлинри наукăсен академийĕ преми пама тăнă, вăл çав премие те йышăнман.

Нумай çулсем иртĕç, анчах та Пастерăн ятне çынсем ĕмĕр-ĕмĕрех çав тери тав туса асăнĕç. Аслă ученăй-новаторăн пурнăçĕ, вăл çĕнĕ яналасем тĕпчесе шырани тата тăрăшса ĕçлени ĕмĕр-ĕмĕр кăтартуллă пример пулса тăрĕ, мĕнпур этемлĕх ырлăхĕшĕн çутçанталăка çĕнтерес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнÿсем тума чĕнсе тăрĕ.

А. ИМШЕНЕЦКИЙ,
Биологи наукисен докторĕ.

Кашкăрсене ытларах пĕтерер

Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, кăçал пирĕн республикăри сунарçăсен 150 кашкăрпа 60 кашкăр çури вĕлермелле. Çак задачăна республикăри сунарçăсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Кашкăр тытакан сунарçăсем тата колхозниксемпе лесниксем лайăх ĕçленине пула, çуркуннепе çуллахи сезонра республикăра пурĕ 97 кашкăрпа 134 кашкăр çури вĕлернĕ.

Кашкăр çурисене хăйсен йăвинче тытас тĕлĕшпе çаксем пултарулă ĕçлеççĕ: В. Николаев (Çĕмĕрле районĕнчи Кумашка ялĕ), И. Школьников (Вăрмар районĕнчи лесник), В. Косарев (Канаш районĕнчи Сиккасси ялĕ), Д. Илюхин (Пăрачкав районĕнчи Никулино ялĕ) тата ыттисем те. Вĕсем кашниех 8—10-шар кашкăр çури вĕлернĕ.

Халĕ сунарçăсемшĕн чи хĕрÿ ĕç вăхăчĕ—кĕркуннепе хĕллехи сезон пуçланать. Çак сезонра сунарçăсем татах та лайăхрах ĕçлеме тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вĕсен йышне юлашки вăхăтра Хĕрлĕ Çартан таврăнакан воинсем чылай хутшăнчĕç.

Кашкăрсене пĕтерес ĕçе хатĕрленме уйхирти тырпула пухса кĕртнĕ хыççăнах тытăнмалла. Халех хатĕрленме тытăнни кĕрхи тата хĕллехи сезонра кашкăр тытас тĕлĕшпе татах та пысăк ĕçсем тума май парĕ.

Кашкăр тытма хатĕрленес ĕçе мĕнрен тытăнмалла-ха? Чи малтан кашкăрсем ăçта тата мĕн чухлĕ пуррине шута илмелле. Ку йывăр ĕç мар. Ăна çĕрле тата тул çутăлас умĕн кашкăрсем уланă тăрăх пĕлме пулать, вĕсем çак вăхăтра яланах хăйсен йăви патĕнче улаççĕ. Кашкăрсем уласси август уйăхĕнче пуçланать. Вĕсем ăçта пурăннине пĕлнĕ хыççăн, кашкăрсемпе кĕрешме кашкăр тытакан 2 е 3 сунарçăран пысăках мар бригадăсем тумалла. Кашкăрсене тĕрлĕ майсемпе: пĕтĕм халăх йышĕпе тухса, хĕрлĕ флажоксем лартса, шултăра выльăх-чĕрлĕх вилли патне капкăнсем лартса, вилĕсем патĕнче вăрттăн хурал тăрса тата вĕсене вилĕ патĕнче вăрçтарса тытма пулать. Çав пур майсенчен те чи лайăххи вăл—вăхăтра вырнаçтарса хунă вилĕ. Кашкăрсем вилĕ выльăха çинĕ майăн вилĕ шăрши сарăлсах пырать, унта вара пур кашкăрсем те пухăнма пуçлаççĕ. Вĕсене вара хĕллехи вăхăтра çав вилĕ патне кĕрсе çÿрекен сукмаксем çине капкăнсем лартса е тĕрлĕ вĕлермелли япалисем хурса тытма пулать.

Чăваш республикинчи сунарçăсен обществин тата «Заготживсырьепа» Чăвашпотребсоюз системине кĕрекен хатĕрлев организацийĕсен кашкăр тытакан сунарçăсене сунар хатĕрĕсемпе боеприпассем парса пулăшмалла.

Кашкăр—выльăх-чĕрлĕх тăшманĕ, вăл темиçе пин выльăх-чĕрлĕхпе килти кайăк-кĕшĕксене тытса колхозсемпе колхозниксене калама çук пысăк сиен кÿрет.

ПОТОЛОКОВ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ икĕ лару туса иртнерĕ. Ирхи ларура В. М. Молотов председатель пулнă, каçхи ларура—Ван Шицзе господин. Ирхи ларура Франци вăрçăра хăй курнă сиене саплама ыйтнине сÿтсе-явнă. Иккĕмĕш ларура Совет Германие контроллесе тăрасси çинчен тата унти администраци çинчен Франци делегацийĕ тăратнă меморандума сÿтсе-явма пуçланă. Вара ку ыйтăва Ют çĕршыв ĕçĕсен совечĕн хальхи сессийĕн пĕр-пĕр ларăвĕнче татах пăхса тухма йышăннă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн çитес ларăвĕ сентябрĕн 27-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен пулать.

Союзниксен Контроль Совечĕ Германи халăхне чĕнсе калани

Германи умне çĕнĕрен кăларса тăратнă хăшпĕр требованисем

БЕРЛИН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Контроль Совечĕ, Германи парăнни çинчен 1945 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче Берлин хулинче пĕлтернине шута илсе, Германи халăхĕ умне çĕнĕрен хăшпĕр требованисем кăларса тăратнă. Вăл требованисем Германие пĕтĕмпех çĕнтерниченчен тата вăл пĕр сăмахсăрах парăннинчен тухса тăраççĕ. Çав требованисене Германин пурнăçа кĕртмелле.

Германи халăхне чĕнсе калани пахарах шухăшĕсем çаксем:

Германин тип çĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене, СС, СА, СД тата гестапона (вĕсен мĕнпур организацийĕсемпе, штабĕсемпе тата учрежденийĕсемпе пĕрле), офицерсен корпусне, резервистсен корпусне, çар училищисене, вăрçă ветеранĕсен организацийĕсене, çар тата çурма çар организацийĕсене ыттисене те пĕтĕмпех пĕтерсе лартмаллине тепĕр хут çирĕплетсе панă. Вĕсене союзниксен представителĕсем кăтартнă майсемпе пĕтерсе лартмалла. Германи халăхĕн çар ĕçне вĕренме, вăрçă тĕлĕшпе пропаганда тума, çар тĕлĕшпе мĕнле те пулсан ĕçлеме юрамасть.

Германи влаçĕсемпе чиновникĕсен хăйсене Германин 1937 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчи чиккисен тулашĕнчен тата çав чикĕсем хушшинчи кирек мĕнле районран та куçма союзниксен представителĕсем хушнине пăхăнмалла.

Германи ытти çĕршывсемпе çыхăнса тăрас ыйтусене пурне те союзниксен представителĕсем хăйсем майлаштарса пыраççĕ. Союзниксен представителĕсем ирĕк памасăр, Германи влаçĕсемпе граждансем ют çĕршывсене нимĕнле обязательствăсем те памалла мар, вĕсемпе нимĕнле килĕшÿсем те тумалла мар. Халăха мĕнле те пулин шухăшлаттармалли хатĕрсене тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе союзниксен представителĕсем кăларакан распоряженисене Германи влаçĕсен пурнăçа кĕртсе пымалла.

Германин укса-тенкине, ялхуçалăхне, промышленноçне, коммунальнăй предприятийĕсене, суту-илĕвне, валеçÿ ĕçне, пĕтĕмĕшпе илсе каласан—Германи экономикине пĕтĕмпех е унăн кирек мĕнле пайне те союзниксен представителĕсем хăйсем контроллес тенĕ пек контроллесе тăма пултараççĕ. Тĕрлĕ йышши çар материалĕсене тума е Германи тулашĕнче туянма юрамасть. Вăрçă тĕлĕшпе е çар пурлăхĕ тăвас тĕлĕшпе тунă тĕпчев ĕçĕсен мĕнпур материалĕсене Германи влаçĕсен союзниксен представителĕсене памалла.

Союзниксен представителĕсем ирĕк памасăр, Германи государствин, унăн тĕп банкĕн, муниципалитет влаçĕсемпе вырăнти влаçсен тата Германирипе Германи тулашĕнчи гитлерла организацисен пурлăхĕпе нимĕнле майпа та усă курма юрамасть. Германи влаçĕсен тата Германире пурăнакан мĕнпур çынсен ылттăнпа кĕмĕл укçасене тата ылттăнпа кĕмĕл чăмаккисене, çавăн пекех тата платина чăмаккисене союзниксен представителĕсене памалла. Государствăн, муниципалитетсен е уйрăм çынсен предприятийĕсен пурлăхне пытарма, пĕтерме, путарма, сÿтме, ытти çĕре куçарма тата ытти çынна пама юрамасть.

Пĕрлешнĕ нацисен е вĕсен граждансен Германири пурлăхне, пурлăх документсене тата интересĕсене Германи влаçĕсем сыхласа тăмалла.

Союзниксен представителĕсем ирĕк памасăр е хушмасăр, Германин пĕр суту-илÿ судни те, вăл шутра пулă тытмалли судни те, тинĕсе кайма пултараймасть. Союзниксен представителĕсем хушмасăр, суднасене ют çĕршывсен флагĕпе çÿретме, контроллеттерме е ытти служăбăна пама юрамасть.

Германире нимĕçсен вĕçсе çÿремелли кирек мĕнле аппарат тума тата ăна тытса тăма е унпа усă курма юрамасть. Халăх куçса çÿренине йĕркелес тĕлĕшпе тата поездсене, çавăн пекех тата Германи çыннисем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна çÿренине тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе союзниксен представителĕсем паракан пур распоряженисене те Германи влаçĕсен пурнăçа кĕртсе пымалла.

Гитлеровецсен чи аслă пуçлăхĕсене суд тума, çавăн пекех тата вăрçă преступленийĕсем е çавăн йышши ытти преступленисем тунă, е вĕсене тума хĕтĕртсе тăнă е вĕсене тума хушнă тесе шутлакан кирек мĕнле çынсене те суд тума кирлĕ материалсемпе документсене Германи влаçĕсен тупса памалла тата çавăн чухне кирлĕ пулакан кирек мĕнле свидетеле те илсе пымалла.

Германири национал-социалистсен партийĕ текен партие пĕтĕмпех тата татăклăнах пĕтерсе лартаççĕ, ăна закон хÿтлĕхĕнчен кăлараççĕ. Германи влаçĕсемпе гражданĕсене нимĕнле вăрттăн организацие те пухăнса ĕçлеме май памалла мар. Гитлер кăларнă законсене пăрахăçа кăларас тата Германи законĕсене, право, суд, администраци, çутĕç системисене улăштарас тĕлĕшпе тата вĕсен служащийĕсене улăштарас тĕлĕшпе союзниксем паракан распоряженисене Германи влаçĕсен пĕр пăркаланмасăр пурнăça кĕртсе пымалла.

Германи влаçĕсен кирек кама та вăл урăх раса çынни пулнăшăн, унăн ÿчĕ урăх тĕслĕ пулнăшăн, вăл урăх чĕлхепе калаçнăшăн, урăх тĕн тытса пурăннăшăн е унăн политика шухăшĕсемшĕн е вăл Пĕрлешнĕ нацисемпе çыхăннăшăн, вĕсене кăмăлланăшăн хĕсĕрлеме юрамасть.

Танюг агентстви пĕлтерни

БЕЛГРАД, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио каланă тăрăх, ют çĕршывсенчи хăшпĕр агентствăсемпе хаçатсем çапла пĕлтернĕ: Милан Гаврилович тата эмиграцири ытти хăшпĕр çынсем Лондона Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне çыру янă. Çав çырура вĕсем Югославири государство йĕрки демократиллĕ йĕрке мар, Югославире коммунистсен партийĕн диктатури пурнăça кĕрсе пырать, теççĕ, союзниксенчен Югославири суйлавсене тĕрĕслесе тăма хăйсен миссине яма ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен Югославире граждан вăрçи пуçланса кайнă, теççĕ.

Çавăн пирки халăх правительствин президиумĕ Танюг агентствине çапла пĕлтерме полномочи панă:

1) Югославире демократиллĕ йĕрке мар, унта пĕр парти режимĕ пуç пулса тăрать тени питĕ кулăшла. Югославири мĕнпур органсене пурте пĕртан пулса вăрттăн сасăласа суйласа лартнă. Югославире Халăх фронтне кĕрекен партисемшĕн те, çав фронта кĕмен партисемшĕн те пуху ирĕклĕхĕпе пĕрлешÿ ирĕклĕхĕ туса хунă. Çакна кашни çын хăй курма пултарать. Югославири йĕрке демократиллĕ йĕрке мар тесе калани тата ак çакăн пирки тĕрĕс мар тата кулăшла пулса тăрать: вăл сăмахсене ĕлĕк диктаторла режима хутшăннă çынсем тата çав режима пулăшса тăнă çынсем калаççĕ.

2) Югославире пурнăç йĕркеллĕ те лăпкă тăрать. Югослави хăйĕн шалти лару-тăрăвне хăвăрт йĕркелесе пырать. Шăп та министрсен советне çыру янă çынсем ĕнтĕ граждан вăрçи кăларса тăнă. Гаврилович тата ыттисем, эмиграцири правительствăн министрĕсем пулса тăрса, мĕн вăрçă пуçланнăранпах Драже Михайловича тата ытти квислинговецсене оккупантсемпе пĕрле килĕштерсе ĕçлеме хушса тăнă, вĕсем граждан вăрçи кăларса тăнă. Югослави правительстви аллинче документсем пур, вĕсенчен пĕр пайне пичетлесе кăларнă ĕнтĕ. Çав документсем тăрăх малта асăннă çынсене, темĕн чухлĕ преступлени организацилене тата вĕсене тума хавхалантарнă çынсем тесе шутласа, вăрçă преступникĕсен спискне кĕртнĕ.

3) Югослави союзлă çĕршывсенчен пĕри пулса тăрать. Пĕрлехи тăшмана çĕнтерес тесе, Пĕрлешнĕ нацисен идеалĕсене пурнăça кĕртес тесе, вăл пуринчен те ытларах çухату тÿсрĕ. Ку çеç те мар. Вăхăтлăх парламентпа Югослави правительстви хăйсен пур постановленийĕсене те союзлă государствăсен руководителĕсен Крымри конференцийĕнче йышăннă решенийĕсемпе килĕштерсе йышăнаççĕ.

4) Югославире çакăн пирки тĕлĕнеççĕ: малта асăннă çынсем нацистсем майлă ĕçлесе тăни çинчен пĕлнĕ хыççăн та ют çĕршывсенче вĕсен сиенлĕ те намăссăр ĕçĕсене лайăхлатса кăтартакан хаçатсемпе агентствăсем тупăнаççĕ.

5) Малта каланинчен çакă курăнса тăрать ĕнтĕ: асăннă çырура калани малтан пуçласа вĕçне çитиччен суя сăмах. Вăл çырăва союзлă государствăсенчи общественноçа улталас тесе, пирĕн государствăн шалти ĕçĕсене хутшăнтарас тесе, демократиллĕ йĕркене çирĕплетсе пыма тата çĕршыври условисене кирлĕ пек йĕркелеме чарас тесе çырса панă.

Маньчжурире Японин хĕçпăшалсем хунă вăрттăн склачĕсене тупнă

ЧИТА, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Японин хĕçпăшалĕсен пĕр пысăк складне тата икĕ пĕчĕк складне тупнă. Çав складсене японецсем Хинган тăвĕсен хĕвелтухăç айккинчи вăрмансенче тунă, вĕсене курăнмалла мар туса хунă. Çав складсем патĕнче нимĕнле хурал та пулман. Вăл складсенче тупăсем, снарядсем, пулеметсем, винтовкăсем, минометсем тата пысăк мар темиçе самолет тупнă.

Макартур полномочийĕсем çинчен Шурă Çурт каласа пани

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Ăна çар министерствипе тинĕс министерстви тата государство департаменчĕ çырса хатĕрленĕ. Вара ăна Трумэн президент ырланă. Сентябрĕн 6-мĕшĕнче вăл пĕлтерĕве Макартур генерала панă. Пĕлтерÿре Японире союзлă державăсен ячĕпе ĕçлесе тăракан верховнăй командующин Макартур генералăн полномочийĕсем çинчен ăнлантарса панă. Унта çапла каланă:

1) Государствăна тытса тăрас ĕçре императорпа Япони правительстви Сире—союзлă державăсен верховнăй командующине—пăхăнса тăраççĕ. Сирĕн хăвăр задачăрсене пурнăça кĕртме кирлĕ пек ĕçлесе тăмалла. Эсир Японипе договор тăрăх мар, Япони пĕр сăмахсăрах парăннине шута илсе çыхăнса тăратăр. Сирĕн власть чи аслă власть пулса тăнă пирки Сирĕн японецсене хăвăрăн полномочисем çинчен сÿтсе-явма памалла мар.

2) Японие контроллесе тăрас ĕçе Япони правительстви урлă пурнăça кĕртсе пымалла, анчах ăна çапла туни лайăх результат панă таран çеç çав правительство урлă тумалла. Эсир, кирлĕ пулсан, ăна тÿрех те пурнăça кĕртме пултаратăр. Хăвăр приказăрсене Эсир хăвăр кирлĕ тесе шутлакан майсемпе, вăл шутра хĕçпăшаллă вăйпа та, пурнăça кĕртме пултаратăр.

3. Потсдамри декларацире кăтартнă условисем пĕтĕмпех пурнăça кĕрĕç. Вăл условисене эпир хамăра хамăр Японипе договорти обязательствăсем тăрăх çыхăннă тесе шутланипе мар пурнăça кĕртĕпĕр, эпир вĕсене Япони тĕлĕшпе тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнче мирпе хăрушсăрлăх туса хурас тĕлĕшпе Потсдамри декларации калани хамăр политикăн пĕр пайĕ пулса тăнă пирки пурнăça кĕртĕпĕр.

Парижра пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ уçăлнă

ПАРИЖ, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 25-мĕшĕнче ирхине Парижра пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ уçăлнă. Конференцие Францири ĕç конфедерацийĕн генеральнăй секретарĕ Леон Жуо уçнă. Вăл конференци уçнă чухне кĕске сăмах каланă.

Жуо сăмахĕ хыççăн администраци комитечĕн генеральнăй секретарĕ Луис Сайян конференцин 6 председатель пулмалли çинчен калакан сĕнĕве вуласа панă. Председательсем пулма çаксене сĕннĕ: Францири ĕç конфедерацийĕн генеральнăй секретарьне Леон Жуона, Англи профсоюзĕсен конгресĕн генеральнăй секретарьне Вальтер Ситрина, СССР ВЦСПС-ĕн председательне В. В. Кузнецова, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Производствăллă профсоюзĕсен конгресĕн вице-председательне Хиллмэна, Латинла Америкăри ĕç конфедерацийĕн представительне Ломбардо-Толеданона тата Китайри ĕççыннисен ассоциацийĕн представительне Шу-дене.

Голландин представителĕ пĕчĕк çĕршывсенчи профсоюзсен представительне председательсен спискне кĕртме сĕннĕ. Вăл Швеци делегатне сĕннĕ. Çав сĕнÿшĕн 113 сасă, хирĕç 83 сасă пулнă. Çапла вара Швеци представительне Линберга 7-мĕш председателе суйланă. Жуо Луи Сайяна генеральнăй секретаре суйлама сĕннĕ. Ку сĕнÿшĕн пурте сасăланă.

Ку ларура Луи Сайян устав çинчен доклад туса панă.

Сайян çапла каланă: устав проектне Швеци профсоюзĕсем, Индири Ĕç конфедерацийĕ, Британи тредъюнионĕсем, совет профсоюзĕсем тата Палестинăри еврейсен рабочи федерацийĕ тÿрлетме сĕннĕ. Тÿрлетме панă сĕнÿсене устав хатĕрлекен комиссие пама йышăннă.

Сайян доклачĕ хыççăн пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăннă.

Францири кантонсенче пулса иртнĕ суйлавсен результачĕсем

ПАРИЖ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Францин шалти ĕçсен министерстви 1.618 кантонри суйлавсен результачĕсене пĕлтернĕ. Ку шута Тури Вьенна департаменчĕнчи 29 кантон кĕмеççĕ, мĕншĕн тесен унта суйлавсем пулман, вăл шута тата Париж хулипе Сена департаменчĕнчи кантонсем те кĕмеççĕ, мĕншĕн тесен унта суйлав йĕрки урăхла.

Çак çынсем суйланнă: социалистсем—393, коммунистсем—133, радикал-социалистсем—350, независимăй социалистсем—66, халăхпа республика юхăмĕнчен—127 çын, независимăй республиканецсемпе радикалсем—205, республиканецсемпе демократсен союзĕнчен—203 çын, консерваторсемпе сылтăмри независимăйсем—93, ыттисем—48.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Кĕсре çухалнă. Паллисем çаксем: тĕсĕ хура-хăмăр, çÿллĕшĕ вăтам, çамки çинче пĕчĕк шурă пăнчă пур, 1941 çулта çуралнă. Çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: ЧАССР, Советский район, колхоз «Чекист». Пĕлтерекене правлени укçа тÿлет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин—0-23.

НТ 00263 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 42 п. л. Тираж 10.000 экз.